28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАЙ 4 ЭРНЕКУН 84(6835) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫар ҫарӗсене тата Тинӗс-Ҫар флотне

Совет Союзӗн Маршалӗ ЖУКОВ командир пулса ертсе пыракан БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ КОНЕВ командир пулса ертсе пыракан УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, урамсенче вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн нимӗҫ ҫарӗсен Берлинри ушкӑнне пӗтӗмпех аркатса тӑкнӑ та паян, майӑн 2-мӗшӗнче, Германи столицине БЕРЛИН хулине—нимӗҫ империализмӗн центрне тата нимӗҫ агрессийӗн вучахне—пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ.

БЕРЛИН хулине хӳтӗленӗ гарнизон, Берлин оборонин начальникӗпе артиллери генералӗпе ВЕЙДЛИНГПА тата унӑн штабӗпе пӗрле, паян, 15 сехетре, хирӗҫ тӑма пӑрахнӑ, хӗҫпӑшала пӑрахса тыткӑна параннӑ.

Майӑн 2-мӗшӗнче 21 сехет тӗлне пирӗн ҫарсем БЕРЛИН хулинче 70.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БЕРЛИНА туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: арми генералӗн СОКОЛОВСКИН, КУЗНЕЦОВ генерал-полковникӑн, ЧУЙКОВ генерал-полковникӑн, БЕРЗАРИН генерал-полковникӑн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-лейтенантӑн, ЛУКЬЯНЧЕНКО генерал-лейтенантӑн, ЧЕРЕВИЧЕНКО генерал-полковникӑн, КАЗАНКИН генерал-лейтенантӑн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантӑн, РЫЖОВ генерал-лейтенантӑн, ЖЕРЕБИН генерал-лейтенантӑн, РОСЛЫЙ генерал-лейтенантӑн, ТЕРЕШКОВ генерал-лейтенантӑн, АНДРЕЕВ генерал-лейтенантӑн, БУКШТЫНОВИЧ генерал-майорӑн, БЕЛЯВСКИЙ генерал-майорӑн, КУШЕВ генерал-майорӑн, БАРИНОВ генерал-майорӑн, ПЕРЕВЕРТКИН генерал-майорӑн, РОГАЧЕВСКИЙ генерал-майорӑн, БАТИЦКИЙ генерал-майорӑн, ШВАРЕВ генерал-майорӑн, ФИРСОВ генерал-майорӑн, артиллери генерал-майорӗн ХЕТАГУРОВӐН, ШАТИЛОВ генерал-майорӑн, ШАФАРЕНКО генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, КОЗИН генерал-майорӑн, КАРАПЕТЯН генерал-майорӑн, КРАСИЛЬНИКОВ генерал-майорӑн, ШУГАЕВ генерал-майорӑн, ЗАЛЕЗЮК генерал-майорӑн, СТАНКЕВСКИЙ генерал-майорӑн, ПАНКОВ генерал-майорӑн, ГЛЕБОВ генерал-майорӑн, БАКАНОВ генерал-майорӑн, ДУК генерал-майорӑн, СЕРЮГИН генерал-майорӑн, АСПАРЯН генерал-майорӑн, СОКОЛОВ генерал-майорӑн, ДОРОФЕЕВ генерал-майорӑн, СЫЗРАНОВ генерал-майорӑн, ГАЛАЙ генерал-майорӑн, ШКРЫЛЕВ генерал-майорӑн, САФАРЯН генерал-майорӑн, ВЫДРИГАН генерал-майорӑн, БЕВЗЮК генерал-майорӑн, МЫШКИН генерал-майорӑн, КОРЧИКОВ генерал-майорӑн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорӑн, ВИХИН генерал-майорӑн, АНТОНОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн, ГЕРВАСИЕВ полковникӑн, СОЛОВЬЕВ полковникӑн, ШИШКОВ полковникӑн, ФОМИЧЕНКО генерал-майорӑн, СМОЛИН полковникӑн, ВОРОБЬЕВ полковникӑн, МАРЧЕНКО полковникӑн, НЕГОД полковникӑн, АСАФОВ полковникӑн, ШАЦКОВ полковникӑн, РЫБАЛКА полковникӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн БОГДАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КАТУКОВӐН, РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн НОВИКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ОРЕЛӐН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРИВОШЕИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СУХОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн БЕЛОВӐН, ШАЛИН генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БАХМЕТЬЕВӐН, УПМАН генерал-майорӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн САЛМИНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн СТОГНИЙӖН, ДРЕМОВ генерал-майорӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КИРИЧЕНКӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЮЩУКӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МИТРОФАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВАЙНРУБӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн АНИСИМОВӐН, НИКОЛАЕВ полковникӑн, БАБАДЖАНЯН полковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн КАЗАКОВӐН, артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ШАНШИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ПОЖАРСКИЙӖН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ИГНАТОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн РОЖАНОВИЧӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн КОЖУХОВӐН, артиллери генерал-майорӗн МОРОЗОВӐН, артиллери генерал-майорӗн КОСЕНКӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЛАСКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ФРОЛОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧОВӐН, артиллери генерал-майорӗн СНЕГУРОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕБЕДОВСКИН, артиллери генерал-майорӗн КОЗНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн БРЮХАНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ШЛЕПИНӐН, артиллери генерал-майорӗн БОГДАНӐН, артиллери генерал-майорӗн СЕРЕДИНӐН, артиллери генерал-майорӗн КАМЕНСКИН, артиллери генерал-майорӗн ПОЛОСУХИНӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, артиллери генерал-майорӗн НИКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорӗн МЕНТЮКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ДОБРИНСКИН, артиллери генерал-майорӗн КРАСНОКУТСКИН, ФАНТАЛОВ полковникӑн, ПАСЬКО полковникӑн, КОРЧАГИН полковникӑн, ОВЕРЧЕНКО полковникӑн, ЛЮБИМОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; Хӗрлӗ Ялавлӑ Днепр флотилийӗн ГРИГОРЬЕВ контр-адмиралӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн ЛЯЛЬКОН карапӗсемпе чаҫӗсем; Авиаци Главный Маршалӗн НОВИКОВӐН, Авиаци Главный Маршалӗн ГОЛОВАНОВӐН, авиаци генерал-полковникӗн РУДЕНКӐН, авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн САВИЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БЕЛЕЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ТУПИКОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ЛОГИНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЧЕТЧИКОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн НЕСТЕРЦЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн РЯЗАНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн УТИНӐН, авиаци генерал-майорӗн ТОКАРЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорӗн КОРОВАТСКИН, авиаци генерал-майорӗн СКОКӐН, авиаци генерал-майорӗн СИДНЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн ДЗУСОВӐН, авиаци генерал-майорӗн СЛЮСАРЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн ЗАБАЛУЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн АРХАНГЕЛЬСКИН, НИКИШИН полковникӑн, СТАЛИН полковникӑн, ПОКРЫШКИН полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн КОМАРОВӐН, АЛЕКСАНДРОВИЧ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн ПРОШЛЯКОВӐН, инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн ГАЛИЦКИН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн МАРЬИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТКАЧЕНКӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ФУРСӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ХАРЧЕВИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЖИРОВӐН, БЕЛЬСКИЙ полковникӑн, КАМЕНЧУК полковникӑн, ПОЛУЭКТОВ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн МАКСИМЕНКӐН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БУЛЫЧЕВӐН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн АКИМОВӐН, ЧЕРКАСОВ полковникӑн, ФАЛИН полковникӑн, СМОЛИЙ полковникӑн, ЗАХАРОВ полковникӑн, ПЛОТКИН полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, ОСТРЕНКО полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн ВАКИШӐН, государстве хӑрушсӑрлӑх подполковникӗн ГРИБӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БЕРЛИНА туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «БЕРЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, майӑн 2-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутра пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, историллӗ ӗҫе—совет ҫарӗсем БЕРЛИНА туртса илнине чысласа, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтпа УКРАИНАРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтпа УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсене, БЕРЛИНА туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи майӑн 2-мӗшӗ. № 359.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление вӑйлатса пырса, БАРТ, БАД ДОБЕРАН, НОЙБУКОВ, ВАРИН, ВИТТЕНБЕРГЕ хулисене туртса илнӗ те паян, майӑн 3-мӗшӗнче, ВИСМАР, ВИТТЕНБЕРГЕ хулисем тӗлӗнче пирӗнпе союзлӑ Англи ҫарӗсемпе пӗрлешнӗ.

Малта асӑннӑ хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: БАТОВ генерал-полковникӑн, ПОПОВ генерал-полковникӑн, ГРИШИН генерал-полковникӑн, ТЕТЕШКИН генерал-майорӑн, БОБКОВ генерал-лейтенантӑн, КИНОСЯН генерал-лейтенантӑн, ДРАТВИН генерал-лейтенантӑн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантӑн, РЯБЫШЕВ генерал-лейтенантӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантӑн, ЧУВАКОВ генерал-лейтенантӑн, СМИРНОВ генерал-лейтенантӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-лейтенантӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, ТРУДОЛЮБОВ полковникӑн, МУРАТОВ полковникӑн, КАЛАДЗЕ полковникӑн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорӑн, ГОЛУБЕВ полковникӑн, КАРПЕЛЮК полковникӑн, ТИМОФЕЕВ генерал-майорӑн, КИРСАНОВ генерал-майорӑн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, СКОРОБОГАТКИН генерал-майорӑн, ТЕРЕМОВ генерал-майорӑн, ВЕЛИЧКО полковникӑн, АФАНАСЬЕВ полковникӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, ВАРОХИН полковникӑн, ШЕПЕЛЬ полковникӑн, ЧЕТВЕРТУХИН полковникӑн, ГОРИЧЕВ полковникӑн, ГУСЕВ генерал-майорӑн, ОГИЕНКО полковникӑн, СУПРУНОВ генерал-майорӑн, МЕЛЬДЕР полковникӑн, ЕМЕЛЬЯНЕНКО полковникӑн, КРАСНОТШАНОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЧЕПУРКИН генерал-майорӑн, БРИКЕЛЬ генерал-майорӑн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИЙӖН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕГТЯРЕВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БЕСКИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн МИХЕЛЬСОНӐН, артиллери генерал-майорӗн РАЗИНЦЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВӐН, ЛЕОНОВ полковникӑн, ЗАХАРОВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн РОГОЗИНӐН, артиллери генерал-майорӗн КОЛЕСОВӐН, РЫБКИН полковникӑн, ВАСИЛЕНКО полковникӑн, КИЛЕЕВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНФИЛОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФИРСОВИЧӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПЕТРУШИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВАКӐН, ЮДИН полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ШУЛЬГИНӐН, ПЕТРОВ подполковникӑн, КОНОВАЛОВ полковникӑн, ИГОНИН полковникӑн, ПАРАМОНОВ полковникӑн, ЕГОРОВ подполковникӑн, УРБАНОВ полковникӑн, КУЦ подполковникӑн, ДЬЯЧУК подполковникӑн, ЛОМАКО полковникӑн, ГОРБЕНКО полковникӑн, РАЗИН подполковникӑн, ЮРЕВИЧ полковникӑн, РАЗУВАЛОВ подполковникӑн, ИГНАТОВ подполковникӑн, ГАЙДАЕНКО подполковникӑн, АРТЮШИН подполковникӑн, МОСКАЛЕНКО майорӑн, ШЕВЧЕНКО подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНӐН, авиаци генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БАЙДУКОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКӐН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНӐН, ВОЛКОВ полковникӑн, ДОДОНОВ полковникӑн, ВУСС полковникӑн, ЯКУШИН полковникӑн, РЫБАКОВ полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, ТИХОМИРОВ полковникӑн, ГРИШЕНКО полковникӑн, ПОКОЕВОЙ полковникӑн, ВЕРШАНСКАЯ подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БЛАГОСЛАВОВӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВИТВИНИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ШВЫДКОЙӐН, ТРЕТЬЯКОВ полковникӑн, ДОБЫЧИН полковникӑн, ВИНЬКОВ полковникӑн, МИРОТВОРСКИЙ полковникӑн саперӗсем: ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БОРЗОВӐН, ПРОЦЕРОВ подполковникӑн, ЮРКОВ подполковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн ЗОВАРЧУКӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БАРТ, БАД ДОБЕРАН, НОЙБУКОВ, ВАРИН, ВИТТЕНБЕРГЕ хулисене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, майӑн 3-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫӳлте асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, малта асӑннӑ хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи майӑн 3-мӗшӗ. № 360.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Арми генералне ЕРЕМЕНКӐНА
Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника САНДАЛОВА

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, паян, майӑн 3-мӗшӗнче, ЦЕШИН хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен оборонин вӑйлӑн тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ.

ЦЕШИН хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, БАТЮНЯ генерал-лейтенантӑн, ВОРОБЬЕВ генерал-лейтенантӑн, ГОРДЕЕВ генерал-лейтенантӑн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантӑн, ШМЫГО генерал-майорӑн, ЖУКОВ генерал-майорӑн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорӑн, БУШЕВ генерал-майорӑн, ШУБ полковникӑн, ТЕТЕНКО полковникӑн, МАТУСЕВИЧ полковникӑн, ПАРХОМЕНКО генерал-майорӑн, ГРИНЧЕНКО генерал-майорӑн, КОЛДУБОВ генерал-майорӑн, ТОМИЛОВСКИЙ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ГРЕЧКОСИЙ полковникӑн, ГЕРШЕВИЧ полковникӑн, ЧЕРНЫЙ полковникӑн, КАВЕРИН полковникӑн, ЕВМЕНОВ подполковникӑн, ДРЯХЛОВ полковникӑн, ГРЕДИНАРЕНКО полковникӑн, ВЛАСОВ полковникӑн, КУПЦОВ полковникӑн, ВРУЦКИЙ полковникӑн, МИТОЯН полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, МАНУХОВ майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн КАРИОФИЛЛИН, артиллери генерал-майорӗн ЖИБУРКУСӐН, ДАВЫДОВ полковникӑн, СМИРНОВ полковникӑн, БРУЗГОЛЬ полковникӑн, ОХОТСКИЙ полковникӑн, ШЕВЧЕНКО полковникӑн, ЦИВЧИНСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн РЕМИЗОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНӐН, ПАХОМОВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ подполковникӑн, ШУРЫГИН майорӑн, ЖИРНОВ майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ЖДАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ИЗОТОВӐН, авиаци генерал-майорӗн КОТЕЛЬНИКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорӗн ЛАКЕЕВӐН, ЧУК полковникӑн, БУДИН подполковникӑн, ШЕПЕЛЬСКИЙ подполковникӑн, ХОЛОДОВ подполковникӑн, ЗОЛОТОВ подполковникӑн, МУРАШЕВ полковникӑн, МАРГОШИН майорӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн КОЛЕСНИКОВӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГОВОРОВӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГОРБАЧЕВӐН, техника ҫарӗсен генерал-майорӗн КУЗНЕЦОВӐН, ВОЛОДИН полковникӑн, САВЕЛЬЕВ полковникӑн, ЩЕРБАКОВ майорӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн МАТВЕЕВӐН, БЕЛЯНЧИК полковникӑн, ТАРУНИН полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх подполковникӗн КОРОТКИЙӖН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ЦЕШИН хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, майӑн 3-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ЦЕШИН хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ЦЕШИН хулине ирӗке кӑларасшӑн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи майӑн 3-мӗшӗ. № 361.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн, Совет Союзӗн Маршалӗ ЖУКОВ командир пулса ертсе пыраканскерӗн ҫарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ КОНЕВ командир пулса ертсе пыракан УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, урамсенче хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн нимӗҫ ҫарӗсен БЕРЛИНРИ ушкӑнне пӗтӗмӗшпех аркатса тӑкнӑ та паян, майӑн 2-мӗшӗнче, Германи столицине Берлин хулине—нимӗҫ империализмӗн центрне тата нимӗҫ агрессийӗн вучахне—пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ.

БЕРЛИНА хӳтӗленӗ гарнизон БЕРЛИН оборонин начальникӗпе артиллери генералӗпе ВЕЙДЛИНГПА тата унӑн штабӗпе пӗрле майӑн 2-мӗшӗнче 15 сехетре хирӗҫ тӑма пӑрахнӑ та, алӑри хӗҫпӑшала пӑрахса, тыткӑна параннӑ. Майӑн 2-мӗшӗнче 21 сехет тӗлне пирӗн ҫарсем БЕРЛИН хулинче 70.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче ҫаксем пур: БЕРЛИН оборонин начальникӗ патӗнче уйрӑм порученисем йышӑнса тӑнӑ генералсем—КУРТ ВЕТАЦ генерал-лейтенант тата ВАЛЬТЕР ШМИДТ ДАНКВАРТ генерал-лейтенант, ставка представителӗ ФОСС вице-адмирал, БЕРЛИН оборонин штаб начальникӗ ГАНС РЕХИОР полковник, нимӗҫсен 56-мӗш танковӑй корпус штабӗн начальникӗ ТЕОДОР ФОН-ДИФВИНГ полковник. Тыткӑна илнисем хушшинче тата ҫаксем пур: ГЕББЕЛЬСӐН пропагандӑпа пичет тӗлӗшпе ӗҫлекен пӗрремӗш заместителӗ—философипе истори докторӗ ФРИЧЕ, пичет руководителӗ—философипе истори докторӗ КЛИК, правительство советникӗ—философипе истори докторӗ ХАЙНРИСДОРФ. Ыйтса пӗлнӗ чухне ФРИЧЕ ҫапла каланӑ: ГИТЛЕР, ГЕББЕЛЬС тата генеральнӑй штаб начальникӗ пулма ӗнерен пӗртнӑ пехота генералӗ КРЕБС хӑйсене хӑйсем вӗлерне, тенӗ.

БЕРЛИНРАН кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтпа УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем хупӑрласа илнӗ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Апрелӗн 24-мӗшӗпе майӑн 2-мӗшӗ хушшинче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ҫав районрах пирӗн ҫарсем 120.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех нимӗҫсен, вилнисене кӑна шута илсен те, 60.000 ҫын ытла пӗтнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче нимӗҫсен 9-мӗш арми командующийӗн заместителӗ БЕРНГАРД генерал-лейтенант, эсэсовецсен 5-мӗш корпусӗн командирӗ ЭККЕЛЬ генерал-лейтенант, эсэсовецсен 21-мӗш танковӑй дивизийӗн командирӗ МАРКС генерал-лейтенант, нимӗҫсен 169-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ РАДЧИЙ генерал-лейтенант, ОДЕР ҫинчи ФРАНКФУРТ крепоҫӗн коменданчӗ БИЛЬ генерал-майор, эсэсовецсен 11-мӗш танковӑй корпусӗн артиллери начальникӗ ШТРАММЕР генерал-майор тата авиаци генералӗ САНДЕР. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—304, хир тупписем—1.500 ытла, пулеметсем—2.180, автомашинӑсем—17.600 тата ытти хӗҫпӑшалпа ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

БЕРЛИНРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, НОЙ-РУППИН, КИРИТЦ, ВУСТЕРХАУЗЕ, НОЙШТАДТ, ФЕРБЕЛЛИН, ФРИЗАК хулисене ҫапӑҫса туртса илнӗ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление малалла вӑйлатса пырса, майӑн 2-мӗшӗнче РОСТОК хулипе ВАРНЕМЮНДЕ хулине—пысӑк портсене тата нимӗҫсен Балтика тинӗсӗнчи паха тинӗс-ҫар базисене—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех РИБНИТЦ, МАРЛОВ, ЛААГЕ, ТЕТЕРОВ, МИРОВ хулисене тата АЛЬЕНПЛЕН, РХТЕНБЕРГ, ФРАНСБУРГ, ЗЮЛЬЦЕ, ТРИБЗЕС, ДАРГУН, ТЮРКОВ, ЯБЕЛЬ, ЦЕХЛИН, ГЕРЦШПРУНД ятлӑ пысӑк ялсене йышӑннӑ.

Майӑн 1-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем 5.450 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ тата 78 самолетпа 128 хир туппи тытса илнӗ.

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем Хӗвеланӑҫ Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнче ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, ПАСКУВ, ОРЛОВА, ДЕМБОВЕЦ, ГОРДЗИШУВ, ТУРЗОВКА, ДВГЕ ПОЛЕ, ВЕЛИКОЕ РОВНЕ, ШТЯВНИК, ПОПРАДНО, МОБЛАТИН ятлӑ пысӑк ялсене ҫапӑҫса туртса илнӗ. Майӑн 1-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем 5.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата 196 хир туппи тытса илнӗ.

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем БРНО хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, БРУМОВ, ВАЛАСШКЕ, КЛОБОУКИ, СЛАВИЧИН, ЛУГАЧЕВИЦЕ, БРАЖАЗУВКИ, УГЕРСКИ ГРАДИШТЕФ, НАПАЕДЛА ятлӑ пысӑк ялсене ҫапӑҫса туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Майӑн 1-мӗшӗнче нимӗҫсен 37 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 10 самолетне персе ӳкернӗ.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Советӗнче

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене 1945 ҫулхи март уйӑхӗнче юсамалли плана пурнӑҫласшӑн облаҫсемпе крайсем тата республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухнӑ, вара кӗркуннепе хӗлле юсамалли плана мӗнле тултарнине шута илсе, социализмлӑ ӑмӑртура ҫак облаҫсем мала тухнӑ тесе шутласа, ҫапла йышӑннӑ:

1. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан тӳлемелли премисене ҫаксене парас:

а) кӗркуннепе хӗлле тракторсене юсамалли плана срокчен тултарнӑшӑн тата ялхуҫалӑх машинисене март уйӑхӗнче юсамалли плана ирттерсе тултарнӑшӑн—

Мускав облаҫне

Украина ССР-ӗнчи Винница облаҫне

Ленинград облаҫне,

б) тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене март уйӑхӗнче юсамалли плана ирттерсе тултарнӑшӑн—

Иваново облаҫне

Великие Луки облаҫне.

2. Тракторсене юсамалли плана пурнӑҫланӑ ҫак облаҫсемпе крайсем тата республикӑсем лайӑх ӗҫленине палӑртас: Брянск, Вологда, Киров, Кострома, Куйбышев, Молотов, Пенза, Смоленск, Свердловск облаҫӗсем, Приморски край, Тутар АССР-ӗ, Удмурт АССР-ӗ, Чӑваш АССР-ӗ, Украина ССР-ӗнчи Ворошиловград, Житомир, Каменец-Подольск, Киев, Сумы, Харьков, Чернигов облаҫӗсем; Казах ССР-ӗнчи Семипалатинск облаҫӗ; Латви ССР-ӗ; Карел-Финн ССР-ӗ; Эстони ССР-ӗ.

ШУПАШКАРТИ ЧАПЛӐ ЛАРУ

Апрелӗн 30-мӗшӗнче каҫхине Шупашкарта Майӑн пӗрремӗшӗ ячӗпе чаплӑ лару пулса иртрӗ.

Чаплӑ ларӑва ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗ Романова юлташ уҫрӗ.

Лару президиумӗнче—ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула Комитечӗн секретарӗсем, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗпе Совнарком руководителӗсем, стахановецсем, офицерсем тата ыттисем те.

Тӑваллӑн алӑ ҫупса, ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн аслӑ Сталин ертсе пыракан Политбюро составне хисеплӗ президиума суйлаҫҫӗ.

«Майӑн 1-мӗшӗ—ӗҫҫыннисен кӗрешӳри вӑйӗсене пӑхса тухмалли кун» ҫинчен ВКП(б) Обкомӗн пропаганда енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Вишняков юлташ доклад туса пачӗ.

Чаплӑ ларура пулнисем, пысӑк хаваслансa, Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑнчӗҫ.

Майăн 1-мěшě Хěрлě площадьре

Совет Союзěн халăхěсем Майăн пěррремěшне—ěçсыннисен фашизма хирěç кěрешекен вăйěсене пăхса тухмалли куна — чаплăн та хаваслăн уявлаççě. Ку вăл пысăк çěнтерусен уявě, пирěн социализмлă Тăван çěршывăн çав тери пысăк хăватне кăтартса пани пулчě.

Мускав, уяв ячěпе илемленнěскер, çамрăкланнăскер, çуркуннехи хěвелпе çуталнăскер, ирех вăранчě. Вуншар пин Мускав çыннисем столицăн урамěсемпе площачěсене тухрěç. Пурте Сталин юлташ Майăн пěррремěшě ячěпе панă приказри аслă сăмахсем çинчен, совет хěçпăшалěн аслă çěнтерěвěсем çинчен калаçаççě. Хěрлě Çар çěнтеру ялавне Берлин хули çине çěклесе лартрě... Совет çарěсемпе союзниксен çарěсем Германин вăтаçěрěнче пěрлешрěç... Пирěн çарсем Берлин леш енче Берлинран чылай аякра Эльба шывě çинче çапăçаççě. Хěрлě Çарăн улăпла вăй-хăвачě тата тылри ěçсыннисен пысăк çитěнěвěсем совет хěçпăшалěн çак çěнтерěвěсенче палăрчěç.

Парад пуçланиччен чылай малтан хăнасен трибуни çине темиçе пин çын пырса тулнă. Кунта СССР тата РСФСР Верховный Совечěсен депутачěсем, Мускаври предприятисенче ěçлекен стахановецсем, Хěрлě Çар валли хăватлă хěçпăшал туса кăларакансксерсем, пур. Хăнасем хушшинче—чапа тухнă воинсем, Совет Союзěн Геройěсем, Атăлпа Днепр çинче, Вислăпа Одер çинче, Польша çěршывěнче, Чехословакипе Австрире пулса иртнě пысăк çапăçусенче пулнă воинсем... Кунта совет интеллигенцийěн паллă деятелěсем — Социализмлă Ěç Геройěсем, ученăйсемпе конструкторсем, художниксемпе артистсем, композиторсемпе писательсем. Кунта Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтěнче çав тери пысăк та паттăрла ěç тунă геройхалăхăн чи паллă представителěсем.

Кунта дипломатиллě корпусăн членěсем, ют çěршывсен ССР Союзěнчи çар миссийěсен членěсем, совет прессипе ют çěршывсен прессин корреспонденчěсем.

Спасски башня çинчи сехетěн стрелки 10 сехет патнелле çывхарать. Площадьре çарсем йěркеленсе тăнă. Нимěнле сас-чěвě те илтěнмест. 9 сехет те 55 минут. Мавзолей трибуни çине Сталин юлташ хăпарса тăрать, вара площадěн пěр хěрринчен пуçласа тепěр хěррине çити алă çупни сасă кěрлесе каять. Çак сехетре Хěрлě площадь, пěтěм Мускав, пирěн пěтěм аслă Тăван çěршыв аслă çулпуçа тата полководеца, Хěрлě Çарпа совет халăхне историллě çěнтерусем тума хавхалантараканскере тата организатора саламлать.

Сталин юлташпа пěрле трибуна çине Калинин, Ворошилов, Каганович, Микоян, Жданов, Берия, Шверник, Маленков, Вознесенский юлташсем хăпараççě. Мавзолейěн аялти пайне Хěрлě Çарăн генералитечě йышăнать.

Площаде пухăннă халăх партипе правительствăн руководителěсене, Хěрлě Çарăн полководецěсене хěрӳллěн саламлать.

Шăп 10 сехет. Спасски хапхаран парада йышăнаканě Хěрлě Çарăн Генеральнăй Штабěн Начальникě арми генералě А. И. Антонов юлташ тухать. Парад командующийěнчен Артемьев генерал-полковникран рапорт йышăннă хыççăн вăл йěркеленсе тăнă çарсене пăхса тухать.

Çарсене пăхса тухнă хыççăн Антонов юлташ Мавзолей трибуни çине хăпарать. Генеральнăй Штабăн Начальникě çарсемпе совет халăхне сăмах калать.

Хěрлě Çарăн Генеральнăй Штабěн Начальникě арми генералě А. И. Антонов 1945 çулхи Майăн 1-мěшěнче Хěрлě площадьре каланă сăмах

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсемпе старшинасем, çарпа флотăн офицерěсем, генералсемпе адмиралсем! Совет Союзěнчи ěçсыннисем!

Совет правительстви тата пирěн большевиксен партийě ячěпе тата вěсем хушнă тăрăх Сире ěçсыннисен праçникě — Майăн 1-мěш кунě çитнě май саламлатăп. Совет халăхěпе Хěрлě Çар Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтěнче Майăн 1-мěшне пирěн Тăван çěршыва пěтěмпех тата ěмěрлěхех фашистла захватчиксенчен тасатса çитерне тапхăрта пěррремěш хут уявлаççě. Кăçалхи хěллехи наступлени вăхăтěнче пирěн паттăр çарсем Германи çарне темиçе хучен те питě вăйлăн пыра-пыра çапрěç, çавна пула ěнтě Гитлерăн çар машини арканса кайрě. Хěрлě Çар Хěвелтухăç Пруссие, Померанин чылай пысăк пайне, Силезие, Бранденбург провинцийěн пысăк пайне йышăнса илсе, Мекленбург провинцине пырса кěчě, халě ěнтě Гитлер çарěсене фашистсен шăтăкěн чěрринче—Берлинра аркатать.

Совет çарěсем тата пирěнпе союзлă Англипе Америка çарěсем, хěвелтухăçпе хěвеланăç енчен пырса çапса, нимěç çарěсен фронтне икě пая уйăрса ячěç те Германин вăтаçěр пайěнче пěр-пěрипе пěрлешрěç. Крымри конференцин историллě решенийěсем çакăн пек пурнăçа кěрсе пыраççě ěнтě.

Чаçсен кěрешу ялавěсем çав тери чаплă çěнтерсе пынипе кăна мар чапа тухрěç, çав вăхăтрах вěсем тěнчери цивилизацие фашизм пусмăрěнчен ирěке кăларнипе, Европăри халăхсене нимěç фашисчěсен чуралăхěпе мăшкăлěнчен çăлса кăларнипе чапа тухрěç.

Хěрлě Çар нимěç захватчикěсенчен Польшăна, Чехословакин çур пайне ирěке кăларчě, нимěçсене Венгрирен хăваласа кăларчě. Хěрлě Çарăн чаçěсем. Австри çěршывě çине пырса кěрсе, унăн столицине Вена хулине ирěке кăларчěç.

Хěрлě Çарпа пěрлех гитлеровецсене хирěç Польша, Югослави, Чехословаки, Болгари тата Румыни çарěсем паттăррăн кěрешеççě.

Хěрлě Çар ют çěршывсене тытса илес, урăх халăхсене, вăл шутра Германи халăхне,—чуралантарас задачăна лартмасть. Çакăн пирки те ěнтě тěнчери ирěклěхе юрататкан мěнпур халăхсем Хěрлě Çар çине кăмăллăн, тав туса тата хисеплесе пăхаççě.

Гитлерла стратегсем нимěç çěршывěн чикěри оборонине никам та çěнтерейрес çук тесе шанса тăнине Хěрлě Çарăн кăçалхи наступленийě сирсе пăрахрě. Ку оборонăпа халь аркатса тăкнă. Германи çарěн çурăм шăммине хуçнă. Германин мухтанчăк генеральнăй штабě тěпренех панкрута тухрě, нимěç çарěн стратегине Хěрлě Çарăн стратегийě лайăхрах пулни аркатса тăкрě. Гитлерла Германи, Японие шутламасан, хăйěн мěнпур союзникěсене çухатса пěтерчě, халě вăл пěр пěччен тăрса юлчě.

Вăрçă вăхăтěнче Хěрлě Çар питě пысăк опыт туянчě. Вăл пирěн тăван государствăн интересěсене сыхлама пултаракăн, чи малта пыракан çар пулса тăчě.

Хěрлě Çарăн аслă çěнтерěвěсем пирěн совет стройě лайăхраххинчен, пирěн идеологи, халăхсене пěр-пěрипе мирлě те туслă пурăнма вěрентекен идеологи лайăхраххинчен, пирěн Тăван çěршывăн ěçсыннийěсен аслă паттăрлăхěнчен килеççě. Совет рабочийěсем, хресченсемпе интеллигенци хăйсене шеллемесěр ěçлесе, тăшмана тěппипех аркатмашкăн фронта кирлисене пурне те туса параççě.

Нимěç захватчикěсене хирěç пыракан хаяр çапăçусенче пирěн аслă Совет государстви пур тěрěслеве те тӳссе иртерчě, çирěпленчě, тата вăйлăрах пулса тăчě.

Фронтра та, тылра та тунă çак аслă çěнтерусем пирěн парти, пирěн правительство тěрěс ертсе пынă пирки пулчěç.

Юлташсем!

Гитлерла вăрă-хурахсем пуçласа янă вăрçă вěçленсе пырать. Тăшман вилес патне çитнě, унăн пурăнмалли кунěсем питě сахал тăрса юлнă.

Халě ěнтě тăшмана тěппипех çапса хуçас, ăна хěçпăшалне пăрахса пěр сăмахсăр парăнмалла тăвас задача тăрать.

Ленин—Сталин ялавěпе малалла, гитлерла Германие пуçěпех тата татăклăнах аркатса тăкма!

Сывă пултăр пěтěм тěнчери ěçсыннисен праçникě—Майăн пěррремěшě!

Сывă пулччăр çěнтерӳллě Хěрлě Çарпа Тинěс-Çар Флочě!

Сывă пултăр пирěн мухтавлă большевиксен партийě!

Сывă пултăр пирěн ăслă çулпуç—Верховный Главнокомандующи аслă Сталин!

* * *

Антонов юлташăн пирěн хăватлă Совет çěршывне, çěнтерекен аслă совет халăхне, çěнтерӳллě Хěрлě Çарпа Тинěс-Çар Флотне, аслă çулпуçа тата полководеца—Верховный Главнокомандующие Совет Союзěн Маршалне Сталин юлташа саламласа каланă юлашки сăмахěсене пурте питě хăватлăн «урра» кăшкăрса тата тăвăллăн алă çупса йышăнчěç.

Площадьре уяв ячěпе панă салютăн сасси кěрлесе кайрě. Тупă сассисем, «урра» кăшкăрни, государство гимнěн мухтавлă кěвви—çаксем пурте ěнтě хăватлă симфоние пěрлешсе каяççě.

Çак минутсем ěмěр манми минутсем пулчěç. Çак самантра Хěрлě площадьре пулнă кашни çын пирěн Тăван çěршывшăн, пирěн паттăр халăхшăн, пирěн тăван большевиксен партийěшěн хавасланчě. Пурте Мавзолей трибуни çине, тăшмана çěнтерме хавхалантаракан, çěнтерěве организацилекен аслă Сталин хăйěн соратникěсемпе тăнă çěре, пăхаççě.

... Парад командующийě чаплăн утса тухмашкăн хатěрленме приказ парать.

Мускав гарнизонěн чаçěсен чаплă маршě пуçланать. Ăна Оборона Халăх Комиссарěпачěн офицерěсен пěрлештерне полкě уçать.

Унтан площаде М. В. Фрунзе ячěпе тăракан Хěрлě Ялавлă Ленин орденлě тата 1-мěш степень Суворов орденлě Çар академийěн чапа тухнă колонни пырса кěрет. Мěн чухлě паллă полководец вěренсе тухнă çав академирен! Мěн чухлě герой-фронтовик вěренет унта халь! Вěсен кăкăрěсем çинче темиçешер орден.

Хěрлě площадь витěр, çирěппěн пусса, командирсем—çар академийěсемпе çар шкулěсенче вěренекенсем иртсе пыраççě.

Тинěс-Çар училищинче вěренекенсен йěркеллě колонни пурне те кăмăла каять.

Хěрлě площадьре—НКВД çарěсен Пěррремěшпе Иккěмěш мотострелковăй дивизийěсен боецěсемпе командирěсем.

Мавзолей еннелле пăхса, çěнěрен те çěнěрен стрелковăй чаçсем ирте-ирте пыраççě. Куракансем мухтавлă совет пехотине, Мускав çывăхěнче хăюллă çапăçнăскере. Ленинград çывăхěнче нимěçсене аркатнăскере. Сталинград патěнчи аслă çапăçусенче тăшмана вăйлăн пырса çапнăскере, ăшшăн саламлаççě. Совет пехотинецě вăл—вăрçăн чăн-чăн ěçсыннийě, вăрçăри кирек епле йывăрлăха та çěнтерме пултаракан паттăр пулса тăрать. Вăл, хаяр çапăçса пырса, Сталинград патěнчен Берлин патне çитрě, фашистла тискер кайăкăн шăлне хуçрě.

Площаде Суворов училищинче вěренекенсен икě батальонě пырса кěчě. Çамрăк суворовецсем, Хěрлě Çарăн пулас офицерěсем, питě илемлěн иртсе кайрěç. Вěсенчен нумайěшě, хăйсем çамрăк пулин те, вăрçăн хаярлăхне курса тӳснě. Вěсем хăйсен ашшěсемпе е пиччěшěсемпе пěрле партизансен отрячěсенче пулнă, разведкăсене çӳресе, хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

... Площадьре «иртнě походсен юррин» паллă кěвви янрама тытăнать. Историллě музей енчен пěр юланут—Буденный ячěпе тăракан кавалеристсен аслă шкулěн начальникě Кириченко генерал-лейтенант тухрě. Хăйсен тумěсемпе йăлтăртатса, юланутлă çар площадь витěр йěркеллě иртсе кайрě. Учěсем яп-яка та çап-çавра. Нумай кавалеристсен кăкăрěсем çинче — «Мускава хӳтěленěшěн» ятлă медальсем. Пирěн мухтавлă кавалеристсем, тăшманăн тылне кěрсе кайса, унăн çулйěрěсене пăсса, гитлеровецсен сехрине хăпартса, чаплă ěçсем тунă.

Кавалери хыççăн площаде утлă артиллерин батарейисем, тачанкăсем çинчи пулеметсен эскадронě пырса кěрет. Гитлеровецсен стратегěсем кун пек çар хăйěн ěмěрне тахçанах пурăнса иртерě тесе шутланă. Анчах та вěсем йăнăшрěç. Пирěн воинсем ку вăрçă вăхăтěнче тачанкăсен вăй-хăватне, вăл мěн тери хăвăрт куçса çӳреме пултарнине, унпа кирек мěнле условинче те усă курма юранине лайăх кăтартса пачěç.

Хěрлě Çарăн хăватлă техникин парачě тěрлě калибрлă артиллерие кăтартнинчен пуçланчě. Гвардеецсен миномечěсем пырса тухсан, куракансем хăйсем хаваслннине тытса чараймарěç. Акă вěсем, пěтěм халăх хушшинче чапа тухнă гвардеец миномечěсем, халăх юратса «Катюша» тесе ят панăскерсем. Советăн çак хăватлă хěçпăшалě пирěн Тăван çěршывăн техникин мухтавě пулса тăрать. Мускав çыннисем Хěрлě площадьре нимěйпе хупăрламасăр иртсе каякан «Катюшăсене» пуçласа курчěç. Çак хăрушă хěçпăшал, вăрçă вăхăтěнче совет конструкторěсемпе инженерěсем тунăскер, гитлеровецсен сехрине сахалах хăпартман.

Площадье йывăр артиллери пырса кěрет. Куракансем умěнчен темиçе тěрлě тупăсем,—45 миллиметрлă тупăсенчен тата танксене пемелли зенитнăй тупăсенчен пуçласа, инçене перекен питě пысăк тупăсене çитиччենех—иртсе пыраççě.

Историллě музей енчен бронетанковăй тата механизированнăй çарсем килме тытăнаççě. Броневиксем, автомашинăсем çинчи мотопехота, парашютпа десант антармалли чаçсем пěр шавсăр иртсе пыраççě. Акă, площадь кěрлесе кайрě, чěтреме тытăнчě—хăйсем тěллěн çӳрекен вăйлă тупăсем килеççě. Ку тупăсен вăй-хăватне тăшман пěрре çеç тӳсмен. Вěсен снарячěсем нимěçсен «тигрěсене» аркатаççě, çěмěреççě. Хăйсем тěллěн çӳрекен совет тупписене нимěç техникин нимěнле ěнтě хěçпăшалě те чăтайман, чăтма та пултараймасть.

Çар техникин хăватлă та хăрушă маршне танксем вěçлеççě. Площадь витěр хăватлă танксен икě полкě иртсе каять. Тылри ěçсыннисем вěсем çине тивěçлипе мухтанса пăхрěç. Вěсене танксем тăвакан конструкторсем тата рабочисемпе, инженерсем çеç мар, мěнпур совет çыннисем, çак хăватлă техникăна тума хăйсен ěçне е перекетленě укçи-тенкине хывнăскерсем, юратса пăхаççě. Танксем трибуна тěлěнчен иртсе пынă вăхăтра Хěрлě площадь тěлне авиаци вěççе тухать. Хăвăрт вěçекен истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем янкар тӳпере вěççе пыраççě.

Халě пирěн летчиксем, Германи пěлěтěнче вěççе, тăшмана хăйěн шăтăкěнчех тěппипех çапса аркатма пулăшаççě.

Кăçалхи Майăн 1-мěшěнче пулнă парада темиçе çěр самолет хутшăннă.

1945 çулхи Майăн 1-мěшěнчи парад —питě чаплă, ěмěр манмалла мар уяв пулчě. Ку вăл пирěн Тăван çěршыв аслă Сталин ертсе пынипе тунă çав тери пысăк çитěнӳсен парачě пулчě. Ку вăл — çывăх вăхăтрах çěнтересси парачě!

Пěрлешнě Нацисен конференцийěн 1945 çулхи апрелěн 30-мěшěнче пулнă ларăвěнче В. М. Молотов тухса калани

САН-ФРАНЦИСКО, апрелěн 30-мěшě. (ТАСС спецкорě). Пěрлешнě Нацисен конференцийěн апрелěн 30-мěшěнче пулнă ларăвěнче В. М. Молотов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă:

«Председатель господин, господинсем!

Аргентина пирки, ăна çак конференцие чěнес пирки тăракан ыйтăва совет делегацийě пысăк ыйту тесе шутлать. Эпě çак ыйту çинчен эсир пуртех пěлмен чěлхепе—вырăс чěлхипе калатăп. Анчах эпě çакна пěлетěп: вырăс чěлхи вăл тěрěс ěçшěн питě лайăх чěлхе пулса тăрать, эпě калани сирěншěн ăнланмалла та ěненмелле пулě, тесе шанатăп. (Алă çупаççě).

Аргентинăна çак конференцие чěнес ыйту делегатсем умне паян çеç тухса тăчě. Халиччен ăна çак конференцие чěнекен тăватă державăн представителěсем пěр хут та пăхса тухман. Савăнпа та совет делегацийě, çак ыйтупа тěплěнтерех паллашас тесе тата çак конференцири делегацисене пурне те çак ыйтупа паллашма май парас тесе, ăна пăхса тухассине темиçе куна хăварма сěнет. (Алă çупаççě).

Пирěн пěрлехи тăшмана хирěç пыракан çак вăрçăра Аргентина хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăнине кам пěлмест. Тата çакна пурте пěлсе тăраççě: çак вăрçă вăхăтěнче Аргентина правительствин тулашри политикине те, шалти политикине те ытти Пěрлешнě нацисем ырласах кайман. Хамăн шухăша ăнлантарса парас тесе, эпě чи малтан государство секретарě пулнă Хэлл господин каланине илсе кăтартăп. Акă мěн пичетлесе кăларнă 1944 çулхи сентябрěн 8-мěшěнче:

«Государство секретарě Хэлл ěнер Аргентинăна çěрчăмăрěн çак çурринче фашистла юхăмăн штабě пулса тăрать тесе тата вăл Америкăн ытти пайне пăсма пултаракан çěршыв пулса тăрать тесе пителнě».

Эпě авторитетлă çынсем каланине тата илсе кăтартăп. Акă мěн каланă Рузвельт президент 1944 çулхи октябрěн 1-мěшěнче:

«Аргентинăра юлашки уйăхсем хушшинче ěçсем мěнле пулса пынине эпě тěлěн те тимлěн сăнаса тăтăм. Çакăн пек килěшӳсěр япала пулни курăнать: Европăра, çавăн пекех тата пěтěм тěнчери ытти вырăнсенче те хěсěрлӳпе агрессии вăйěсем татăклă поражени тӳсес сехет ытларах та ытларах çывхарса пынă вăхăтра, шăп çав вăхăтра çěр чăмăрěн çак çурринчи çěршывра нацистпа тата фашистла юхăм, çавăн пекех нацистла тата фашистла майсемпе усă курасси ӳссе пырать». (Алă çупаççě).

Эпě çак çынсем каланине авторитетлă тесе шутлатăп, вěсене шанатăп. Анчах çакă вăл темиçе уйăх каялла пулнă. Унтанпа Аргентинăра ěçсем тен, улшăннă пулě? Эпě илтрěм: Америкăри çěршывсен хăшпěр представителěсем унта лару-тăру лайăхланнă тесе шутлаççě. Манăн Сиртен çакăн çинчен ыйтмалли кăна юлать: совет делегацине, çавăн пекех тата ытти делегацисене те пěр кěске вăхăт хушши фактсемпе паллашма, çапла вара Аргентинăра лару-тăру чăнах та лайăхланнине, вăл лайăхланнă тесе калани чăнах та фактсемпе килěшсе тăнине ěненме май парăр. Фактсемпе паллашма пăртак вăхăт кирлě пулать, сахалтан та темиçе кун кирлě пулать.

Шухăшласа пăхăр-ха: вăрçă вăхăтěнче фашистсене—пирěн тăшмансене—пулăшса тăнă Аргентинăна васкаса, тěплěн шухăшласа пăхмасăр çак конференцие чěнсен, анчах та союзлă çěршыв пулса тăракан Польшăна чěнмесен,—мěн пулса тăрě вара? Çакă паллă: çак вăрçăра пирěн пěрлехи тăшмана хирěç пыракан кěрешěве хăйсен пěтěм вăйне хуракан союзлă çěршывсем хушшинче Польша хисеплě вырăн йышăнса тăрать. Паттăр Польша халăхě пирěн ретре тăрса кěрешнě, халь те кěрешет. Вăл питě нумай жертвăсем тӳснě, халь те тӳсет. Çакна эпир ниепле те манма пултараймастпăр. Çак вăрçă пуçланнăранпах пирěн пěрлехи тăшмана пулăшса тăнă Аргентинăна çак конференцие чěнсен, анчах та Польшăн вăхăтлăх правительствине, Польшăн ирěке кăларнă территорийěнче ěçлекенскерне, Польша халăхě хушшинче питě пысăк авторитетлă пулса тăраканскерне чěнмесен,—çакă вăл конференцин авторитетне пăсма пултаракан çулпа кайни пулать. (Алă çупаççě). Польша правительстви демократиллě правительство пулнине никам та тунма пултараймасть. Польшăн çав вăхăтлăх правительстви халăх çине çирěппěн таянса тăрать, вăл пěрлехи тăшмана хирěç пирěн союзниксемпе пěрле кěрешет. Эпир тата çакна асра тытатпăр: виçě правительство—Америка, Британи тата Совет Союзěн правительствисем—Польша правительствине анлăрах демократиллě никěс çинче çěнетсе улăштарас тěлěшпе пулăшма пулчěç. Çак питě лайăх решение Польша халăхě те ырлани пирки эпě иккěленместěп, пирěн çав решение часрах пурнăçа кěртме тăрăшмалла. Эпир çакна та ăнланатпăр: Польша правительствине çěнетсе улăштарасси вăл çак конференцин ěçě мар, вăл асăннă союзлă виçě правительствăн ěçě, пуринчен ытла вăл поляксен ěçě. Эпир пурте анлăрах демократиллě никěс çинче тунă Польша правительствине курасшăн, çав правительствăпа вара союзлă пур правительствăсем те дипломатиллě çыхăну тытма пуçлěç. Ку вăл тěрěс. Анчах çак конференцире эпир Польшăн пěтěм ыйтăвне татса пама хапсăнмалла мар пулсан, çапах та эпир çак факта шута илмесěр тăма пултараймастпăр: хальхи вăхăтра пěтěм тěнчери конференци ěçлет, çав конференцире Польша халăхěн представителě çук. Кирек мěнле пулсан та, кунта пирěн паттăр союзникăн, Польша халăхěн представительне вырăн памасăр,—вăрçăра пире мар, тăшмансене пулăшса тăнă Аргентинăн представительне вырăн пама юрамасть.

Мана çапла калама пултараççě: Аргентинăн çылăхсем пур, анчах вăл çылăхсене манма юрать, теме пултараççě. Кам пěлет, чăнах та çапла тумалла-и тен, анчах та эпě çапла ыйтатăп: Аргентинăн хăшпěр çылăхěсене манма юрать пулсан, мěншěн пирěн Польшăн чаплă ěçěсене манмалла, мěншěн пирěн пěрлехи тăшмана хирěç пыракан кěрешӳре Польша халăхě тунă чаплă ěçěсене манмалла! (Тăвăллăн алă çупаççě).

Кунта, конференцире, Инди делегацийě пур, анчах Инди вăл никама пăхăнман çěршыв мар. Эпир пурте ăнланатпăр: никама пăхăнман Индин сассине те итлемелли вăхăт килсе çитě. (Алă çупаççě). Çапах та эпир Великобритани правительстви шухăшěпе, йěркелесе çитмен Индин представительне хальхи условисенчех çак конференцие чěнме сěннипе килěшрěмěр.

Кунта Филиппин делегацийě пур, анчах Филиппин вăл никама пăхăнман çěршыв мар. Эпир лайăх ăнланса илетпěр: никама пăхăнман Филиппин сассине те итлемелли вăхăт килсе çитě. (Алă çупаççě). Анчах эпир Америкăри Пěрлешӳллě Штатсен правительствипе килěшрěмěр; Филиппина сасă патăмăр. Совет Союзě çак конференцие представительсем янă хăшпěр правительствăсемпе халиччен дипломатиллě çыхăнман. Анчах апла пулин те, Великобританипе Америкăри Пěрлешӳллě Штатсем сěннине шута илсе, Совет правительстви, кунти мěнпур делегацисен çěршывěсем çак конференцие хăйсем чěннě мěнпур государствăсемпе дипломатиллě çыхăнса тăнине-тăманнине пăхмасăрах, çав делегацисем конференцие хутшăннине хирěç пулмарě. Эпир çапла шутларăмăр: çак ыйтупа та пирěн Великобританипе Америкăри Пěрлешӳллě Штатсем сěннипе килěшмелле, терěмěр. Çакăнта ěнтě Совет Союзě конференци ыйтăвěсем пирки конференцие хăйсем чěнекен ытти правительствăсемпе каласса татăласшăн пулни палăрать. Халиччен çак конференцие чěннě çěршывсене пурне те конференцие хăйсем чěнекен тăватă правительство пěрсаслăн чěннě, çав правительствăсем конференцире пěртан шутланса тăраççě. Эпир çакна питě лайăх йěрке тесе шутлатпăр, эпир çав пěрлěхе çěмěрессине хирěç тăратпăр. (Алă çупаççě).

Эпě çапла шутлатăп: пирěн пурин те çак хальхи пěрлěхшěн тăмалла, пирěн халиччен кам та пулсан çителěксěр тěпчесе пěлнě кашни çěнě сěнěве тимлěн те тěплěн пăхса тухма май пулмалла тума тăрăшмалла. Çавăнпа та эпир çапла шутлатпăр: Аргентина ыйтăвне те васкавлă йěркепе мар, çавăн пек тěплěн сӳтсе-явса татни тěрěс пулнă пулěччě. (Алă çупаççě).

Совет делегацийě çак конференцие Аргентинăна чěнес ыйтăва пăхса тухассине, ăна тěплěрех вěренме май пултăр тесе, темиçе куна хăварма сěнет.

Çапла тума çеç ыйтать совет делегацийě». (Тăвăллăн алă çупаççě).

Пěрлешнě Нацисен Сан-Францискори конференцийěн пěрлехи пиллěкмěш ларăвě

САН-ФРАНЦИСКО, апрелěн 30-мěшě. (ТАСС спецкорě). Пěрлешнě Нацисен Сан-Францискори конференцийěн пěрлехи 5-мěш ларăвě апрелěн 30-мěшěнче каçхине (Мускав вăхăчěпе майăн 1-мěшěнче çěрле) уçăлнă. Ларăва Иден председатель пулса ертсе пынă. Ертсе пыракан Комитет Украинăпа Белоруссие Сан-Францискори конференци ěçěсене хутшăнма халех чěнӳ яма сěннине лару çийěнчех йышăннă.

Ертсе пыракан Комитетăн докладчикě Бельт (Куба) Ертсе пыракан Комитет енчен Аргентинăна та конференцие чěнме сěнесси çинчен пěлтернě хыççăн, лару председателě Иден çак ыйту пирки мěнле шухăшсем пурри çинчен ыйтнă. В. М. Молотов трибуна патне тухнă та сăмах каланă. Вăл Аргентинăна конференцие чěнес ыйтăва пăхса тухассине темиçе кунлăха та пулин каярах хăварма сěннě.

В. М. Молотов тухса каланă хыççăн Колумбин ют çěршыв ěçěсен министрě Льерес Камарго сăмах илнě. Вăл Аргентина ыйтăвне пăхса тухассине каярах хăварас тěлěшпе Молотов юлташ панă сěнěве хирěçленě. Льерес Камарго—Аргентина тěнěл çěршывěсене хирěç вăрçă пуçланă тесе пěлтернě. Камарго каланă тăрăх, Молотов илсе кăтартнă Рузвельтпа Хэлл сăмахěсем тěрěс пулин те, вěсем Аргентинăн ěлěкхи ěçěсем пирки каланă сăмахсем пулса тăраççě. Конференцие Польшăна чěнес пирки тăракан ыйту çинчен каласа, Камарго—Америкăри республикăсем Польша ыйтăвне хутшăнма шутламаççě, тенě.

Ун хыççăн сăмах тухса каланă Мексика делегацийěн пуçлăхě—Мексика ют çěршыв ěçěсен министрě Падилья хăй Камарго майлă пулни çинчен пěлтернě. Падилья çапла каланă: чăн та, Аргентина правительстви Аргентина халăхěн демократиллě шухăшěсенчен аякра тăрать пулин те, конференци «çавăншăн Аргентина халăхне наказани пама тивěçлě мар».

Кун хыççăн тухса каланă оратор, Бельгин ют çěршыв ěçěсен министрě Спаак Молотов юлташăн сěнěвне ырланă. Вăл çапла каланă: совет делегацийě ыйтни аслă та законлă ыйту пулса тăрать, тенě. Вăл, тăватă державăн пěрлěхлě интересěсене сыхлас шутпа, Аргентина ыйтăвне татса парассине каярах хăварма çине тăрсах ыйтнă. Спаак çапла каланă: Аргентина правительстви тěлěшпе, çавăн пекех кунта демократиллě принципа пырса тивнипе тивмени тěлěшпе те пěтěçсе çитнě шухăш çук-ха, тенě. Анчах та, тенě вăл, ку ыйтăва тěплěн тěпчесе хатěрлесе çитермелле, Аргентинăна конференцире халех вырăн парасси пирки шухăшласа пăхмалла. Совет делегацийě çак ыйтăва татса парассине каярах хăварасшăн пулнине кăтартса парса, Спаак çапла каланă: Совет Союзне ыйтнине тивěçтермелле, мěншěн тесен вăл ăслă та законлă ыйту пулса тăрать. Спаак шухăшěпе, мир ěçне организацилекен державăсем пěрлěхлě шухăш-кăмăла упрама тивěçлě. Пěрлешнě Нацисем, тенě Спаак, тăватă держава конференцие килме чěнсе каланине мěнле çырнă çаплипех, пěр сăмахсăрах йышăнчěç тата Ялтăри конференцин решенийěсемпе килěшрěç. Анчах та, тесе хушнă малалла Спаак, Польша çěршывě конференцие хутшăнасси пирки тăракан ыйтăва каярах хăвармалла, мěншěн тесен çав ыйту Крымри конференцин решенийěсемпе çыхăнса тăрать. Польша конференцие хутшăнмалла пулас пулсан, çакна пурте саламланă пулěччěç, тенě юлашкинчен Спаак.

Перу делегачě Белаунде хăйěн сăмахěнче çапла каланă: совет делегацийě Аргентина ыйтăвне татса парассине каярах хăварма ыйтнине ырланă Спаак шухăшěсемпе эпě килěшместěп, тенě, мěншěн тесен çакă вăл çěршывăн шалти ěçěсене хутшăнмалла марри çинчен калакан принципа хирěçленě пулěччě тата Аргентинăн обязательствисене ěненменнине пěлтернě пулěччě, тенě. Белаунде сăмахěсем тăрăх, Аргентина кирлě ěçсене туса ирттернě—вăл тěнěл держависене хирěç вăрçă пуçланă, çавăнпа та ăна Пěрлешнě Нацисен конференцине хутшăнтармалла.

Унтан Стеттиниус сăмах илнě. Вăл конференцире халех решени йышăнма çине тăрса ыйтнă. Стеттиниус çапла каланă: Ěç тăвакан тата Ертсе пыракан Комитетсем Аргентина ыйтăвне сӳтсе-явса решени йышăннă тата Америкăри çěршывсен декларацийě çине алă пусмалли условисене, Аргентина валли тунăскерсене, палăртакан резолюцие Мексикăри конференци пěр шухăш-кăмăллăн ырланă, тенě. Стеттиниус çапла пěлтернě: Америкăри республикăсем Аргентина çав условисене пурнăçа кěртнě тесе шутлаççě тата Аргентинăна Сан-Францискори конференцире хăйсем çумне пěрлештересшěн тăраççě, тенě.

Унтан конференцие председатель пулса ертсе пыракан Иден совет делегачěсен сěнěвне ырлама кирлипе кирлě марри çинчен тата çав ыйтăва темиçе кунлăха каярах хăвармалла тăвассипе тăвас марри çинчен е Аргентинăна халех конференцие кěртмелле тăвасси çинчен тăракан ыйтăва сасăлама сěнӳ панă. Аргентина ыйтăвне татса парассине каярах хăварма панă сěнӳшěн 7 çын, вăл шутра: Молотов юлташ, Бельги делегачě Спаак, Чехословаки делегачě Масарик, Югослави делегачě Шубашич, Норвеги делегачě Ли, Çěнě Зеланди делегачě Фрезер, Грепи делегачě Софианопулос сасăланă. Аргентина ыйтăвне халех татса парассишěн 28 делегат сасăланă. Франци делегацийěн пуçлăхě сасăламасăр тытăнса тăнă. Ун хыççăн Иден Аргентинăна Пěрлешнě Нацисен конференцине халех кěртесси çинчен панă сěнěве сасăлама тăратнă. Аргентинăна конференцие кěртессишěн 31 çын сасăланă, тăватă çěршыв делегачě—Совет Союзě, Чехословаки, Югослави тата Грепи—çав сěнěве хирěç сасăланă.

Аргентина ыйтăвне татса панă хыççăн, Ертсе пыракан Комитетăн докладчикě Бельт: конференцин организациллě ыйтăвěсем çинчен калакан доклада Комитет ырланă, тесе пěлтернě. Конференци доклада пěр шухăш-кăмăллă пулса ырланă.

Аргентина ыйтăвне сасăланă хыççăн çур сехет иртсен, конференцирен нумай делегатсем, вăл шутра Молотов юлташ та, тухса кайнă, нумай делегатсем вара — организациллě доклад тăрăх сасăланă хыççăн тухса кайнă. Çавăнпа та çитес оратор Колумбин ют çěршыв ěçěсен министрě Льерас Камарго хăйěн сăмахне пачах та тенě пек пушанса юлнă залра калама тытăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителěн — 2—89, секретарěн — 4—26, парти пурнăç пайěн 3—97, промышленность пайěн — 3—99, ялхуçалăх пайěн — 5—31, 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00096 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000